[illegible]

1943 июнĕн 18 эрнекун 125(6362) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Утă çулса пуçтарасси тата силос хывасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, çĕрĕç органĕсене, колхозсен председателĕсене тата совхозсен директорĕсене çакăн çинчен уйрăмах асăрхаттарассĕ: утă çулса пуçтарас тата силос хывас ĕçсене вăхăтра, тĕштырă культурисене пуçса кĕме тытăниччен туса ирттерни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать; çавăнпа та иртнĕ çулсенчи йăнăшсене тепĕр хут тăвасран сыхланмалла, иртнĕ çулсенче çак ĕçсене начар йĕркеленине пула чылай районсенче выльăх апачĕ хатĕрлесси вăраха юлса пынă, нумай участоксене çулмасăр хăварнă, акнă курăксене иккĕмĕш хут çулса илмен, çавăнпа та колхозсемпе колхозниксен выльăх-чĕрлĕхне валли хăшпĕр çĕрте апат çителĕклĕ пулман.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнассĕ:

1. Райисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене çакăн пек пума хушас: колхозсен выльăх-чĕрлĕхĕсем валли СССР Совнаркомĕ 1941 çулхи майăн 29-мĕшĕнче «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх валли выльăх апачĕ нумайрах туса илмелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире палăртнă нормăсем чухлĕ выльăх апачĕ пуçса хатĕрлемелле.

2. Колхозсемпе совхозсенче сенокосилкăсем, лоботрейкăсем тата утă çулса пуçтармалли ытти мĕнпур инвентарьсем ĕçе хатĕррипе хатĕр маррине халех тĕрĕслемелле. Утă çулса пуçтарнă çĕрте вĕсемпе пĕлĕмпех тата тул-

[illegible]

ĕçкунĕшĕн вара силос шăтăкĕсене, траншейăсемпе башньăсене тултарса ситернĕ хыççăн 10 килограмм таран утă памалла. Утă çулса пуçтарас ĕçре ĕçленĕшĕн колхозниксене утă мĕн чухлĕ памаллине уйĕç бригадин бригадирĕ кăпан тунă чухне виçсе е туртарса йышăннă тăрăх палăртмалла. Хушса панă утта бригадăри е звенори колхозниксем хушшинче валеçнĕ чухне вĕсем утă çулнă çĕрте миçе ĕçкунĕ тунине шута илмелле. Утă çулнă тата силос хывнă çĕрте ĕçленĕшĕн колхозниксене утă парас ĕçе колхоз правленийĕн утă çулса пĕтернĕ хыççăн, анчах сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, туса ирттермелле.

8. Лаша кӳлсе ĕçлемелли сенокосилкăсемпе пысăк тухăçлăх кăтартса ĕçлекен колхозниксене хавхалантарас шутпа, колхозсене çапла тума сĕнес: тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен вăхăтра 40 гектартан ирттерсе утă çулнă кашни гектаршăн колхозниксене ĕçшĕн хушса 20-шер килограмм утă памалла.

9. Утă çулса пуçтарнă тата силос хывнă çĕрте ĕçлекен, ĕç нормисене тултарса пыракан мĕнпур рабочисене вĕсем пухса хатĕрленĕ тата капана хывнă утăн кашни тонниншĕн çакăн чухлĕ утă парса премилеме совхозсен директорĕсене ирĕк парас: утта алăпа пухса кĕртнĕ пулсан—150 килограмм, лашапа ĕçлесе пухнă пулсан—60 килограмм, тракторпа ĕçлесе пухса кĕртнĕ пулсан—30 килограмм. Хывса хăварнă силосăн кашни тонниншĕн: алăпа ĕçленĕ пулсан — 80 килограмм, ла-

[illegible]

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

ÇАР СЫННИСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШАС ĔÇТУПА ПУЛНĂ КАНАШЛУ

Чăваш АССР Совнаркомĕ районсемпе хула Совет исполкомĕсен председатель заместителĕсен республикăри канашлăвне ирттерчĕ. Канашлу çар сыннисен çемйисене государство пулăшăвне парасси тата вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатасси мĕнле пулса пыни çинчен сӳтсе-яврĕ.

Канашлура ĕççынни депутачĕсен районсемпе хула совет исполкомĕсен председатель заместителĕсем Пылаĕва (Улатăр хули), Краснов (Канаш районĕ), Николаев (Вăрнар), Савруков (Йĕпреç), Сытник (Канаш хули), Дмитриев (Шăхасан) юлташсем тухса каларĕç.

Вĕсем хăйсен отделĕсен ĕçĕсемпе паллаштарчĕç, ĕçри чăрмавсемпе çитменлĕхсене уçса палăртрĕç, малашнехи задачăсем çинчен чарăнса тăчĕç.

Канашлăва Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев юлташ ертсе пычĕ. Канашлу ĕçĕсене ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков, Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕсем Семенов, Киреев, ЧАССР Халăх Комиссарĕсем Золотников, Макаров, Меценатова, Егоров, Лихачев, полковник Алексеев юлташсем хутшăнчĕç.

Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Киреев юлташ çар сыннисен çемйисене пулăшас ĕç республикăра мĕнле пулса пыни çинчен тата малашнехи задачăсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Канашлу вĕçленес умĕн Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташсем тухса каларĕç.

Пирĕн авиаци Унеча, Новозыбков, Рославль, Владиславовка чугунçул узелĕсене тапăнни

Июнĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Унеча, Новозыбков, Рославль, Владиславовка чугунçул узелĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахса чугунçул çинчи вунă эшелона çĕмĕрсе тăкнă тата çунтарса янă. Пирĕн летчиксем Унечăпа Владиславовка чугунçул узелĕсенче уйрăмах вăйлă пушарсемпе вăйлă взрывсем пулнине курнă. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Нимĕç самолечĕсем Саратова тапăнни

Июнен 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ Саратов хулине тапăнма хăтланнă. Пӳлсе тăракан вут-хĕм урлă хула çинелле тăшманăн уйрăм самолечĕсем кăна вĕççе каçнă. Вĕсем тĕлли-паллисĕр фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă. Тухнă пушарсене сӳнтерсе ларнă. Тапăнăва сирсе янă чух 2 нимĕç бомбардировщикне персе ӳкернĕ. [illegible]

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Иосиф Сталина

Польшăн ССР Союзĕнчи патриочĕсен Союзĕн съезчĕ çакна каласшăнах палăртать: мĕнпур пек чăрмавсене пăхмасăрах, тăшмансен пур тĕрлĕ хăтланăвĕсене пăхмасăрах, Совет Правительстви тата Эсир хăвăр поляк халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн пыракан кĕрешĕвĕ çине, вăрçă хыççăн ирĕклĕ те никама пăхăнман тата вăйлă Польша туса хурасси çине, çавăн пекех тата пирĕн халăхсем хушшинче вăрçă хыççăн туслă çыхăнусем туса хурасси çине те ырă кăмăлпа, туслăн пăхассине çухатмарăр.

Поляксен Тадеуш Костюшко ячĕпе тăракан дивизине туса йĕркелеме Эсир килĕшӳ панишĕн, çав дивизие туса йĕркелес ĕçре шур енĕпе те пулăшса пынишĕн, çавăн пекех тата поляк беженецĕсене пулăшассине организацилес ĕç çине тата вĕсен культурăллă çутĕç нушисене тивĕçтерес ĕç çине Эсир ырă кăмăлпа пăхнишĕн Польша патриочĕсен Союзĕн съезчĕ Совет Правительствине тата Сире хăвăра пĕтĕм чун-чĕререн хĕрӳллĕн тав тăвать.

Польша патриочĕсен Союзĕн съезчĕ Сире тата Совет Правительствине çакна шантарса калать: гитлерла тиранне хирĕç кĕрешекен халăхсен пĕрлехи фрончĕ умĕнче ССР Союзĕнчи поляксем хăйсен тивĕçлĕхне, уйрăмах салтак тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртĕç, нимĕç захватчикĕсене хирĕç геройла Хĕрлĕ Çарпа алла-аллăн тăрса кĕрешсе, Польша халăхĕпе Совет Союзĕнчи халăхсем хушшинчи туслăха тата хĕçпăшал тăванлăхне пушпа пĕтĕçтерсе çирĕплетĕç.

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетесси Польшăн национальнăй интересĕ пулса тăнине тата çакă вăл Совет Союзĕн интересĕсемпе кăмăлне те тивĕçтернине пĕтĕм чĕререн ĕненсе тăрса, эпир Сире çакăн çинчен шантарса калатпăр: Польша халăхĕпе Совет Союзĕ хушшинче хирĕçӳ кăларма хăтланакан çынсене эпир пирĕн ĕçсене пăтратма ирĕк памăпăр, Германие çĕнтернĕ хыççăн хамăрăн никама пăхăнманлăха çĕнĕрен ура çине тăратас тата мирлĕ пурнăçа çирĕплетес ĕçре кирлĕ условисем туса паракан Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетессишĕн пĕтĕм вăя хурăпăр.

Татăклă çĕнтерӳ тăвиччен, гитлерла Германи пуçĕпех парăниччен пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç—гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра хамăрăн вăйăмăрсене те, пурнăçăмăрсене те хĕрхенсе тăмăпăр тесе шантаратпăр Сире.

Съезд Президиумĕ:
ВАНДА ВАСИЛЕВСКАЯ,
БЕРЛИНГ — полковник,
АНДЖЕЙ ВИТОС,
ФРАНЦИШЕК КУПШ—ксендз,
ЯКУБ ПАРНАС—профессор,
БОЛЕСЛАВ ДРОБНЕР—доктор,
АНТОНИ СИВИЦКИЙ—полковник,
СТЕФАН ЕНДРИХОВСКИЙ—доктор,
АЛЕКСАНДР КЛОС,
КАЗИМИР ВИТАШЕВСКИЙ.

Польшăн ССР Союзĕнчи патриочĕсен Союзĕн с'езчĕн Президиум членĕсене

Ванда Василевскаяна, Берлинг полковника, Анджей Витоса, Францишек Купша, Якуб Парнас профессора, Болеслав Дробнер доктора, Антони Сивицкий полковника, Стефан Ендриховский доктора, Александр Клоса, Казимир Виташевские.

Совет правительствине ăшă кăмăллă та туслă çыру янăшăн Сире тав тăватăп.

Сире тата Польшăпа Совет Союзĕн халăхĕсем хушшинчи туслăха çирĕплетес, хăвăрăн вăйсене пухас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеме тытăннă Польшăн ССР Союзĕнчи патриочĕсен Союзне хĕрӳллĕн саламлатăп.

Çакна шанса тăма пултаратăр: пирĕн пĕрлехи тăшмана—гитлерла Германие çапса аркатас ĕçе хăвăртлатас, Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетес тата вăйлă та никама пăхăнман Польша туса хурассине пур енĕпе те пулăшас тесе, Совет Союзĕ мĕн тума май пуррине пурне те тăвĕ.

Сире Хăвăрăн ĕçре ăнăçу сунатăп! **И. СТАЛИН.**

Унăн Превосходительствине М. И. Калинина, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Агрессие хирĕç вăрçă вăрçас ĕçре пĕр-пĕрне пулăшас принципсем çинчен пирĕн икĕ çĕршыв хушшинче тунă килĕшĕве алă пуснăранпа çулталăк тултарнă май Эсир ырă кăмăлпа янă послание эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн хаклатăп. Иртнĕ çулталăк хушшинче çав килĕшӳ пĕрлехи тăшмана хирĕç эпир пĕрле тăрса кĕрешессине йĕркелесе тырас тĕлĕшпе ăнăçлă мара пулса тăнине кăтартса пачĕ. Эпĕ шанатăп: çав килĕшӳре палăртнă туслăх тата пирĕн çĕршывсем пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлесси пулас таткăлă çапăçусенче татах та ытларах çирĕпленĕç, вăрçă хыççăнхи тапхăрта ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем хушшинче тĕрĕс те çирĕп мир туса ăна сыхласа усрас ĕçре вĕсем татах та ытларах вăй илĕç.

ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.

Тăшман штабне аркатни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июнĕн 15-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). 50 гвардеец, тăшманăн малти пайĕнчен вăрттăн иртсе, унăн тылне кĕрсе кайнă. Отрядăн ответлă задани пулнă: нимĕç чаçĕн штабне тупасси, штаб документĕсене тытса илесси тата офицера тыткăна илесси.

Разведчиксем уйрăм ушкăнсемпе, ăнăçлăн пытанса пырса, тул çутăлнă çĕре вăрман патне çитнĕ. Кунта вĕсем пĕр кун каçнă, ял патне илсе пыракан çула сăнанă. Ял вăрмантан темиçе километрта пулнă. Разведчиксем нимĕç штабĕ çав ялта пулнине чухласа илнĕ.

Иккĕмĕш çĕр гвардеецсем, тăшман хуралĕнчен пытанса, яла кĕрсе кайнă. Пахчасемпе, çуртсем хӳттипе пырса, вĕсем шкул çурчĕ патне çитнĕ; вĕсен шучĕпе нимĕç штабĕ çавăнта пулмалла пулнă. Малта чи опытлă разведчиксем—Семенков, Журавлев тата Смирнов пынă.

Шкул çуртне икĕ енчен икĕ часовой хураллана, вĕсем пĕрне-пĕри курма пултарайман, вĕсене пĕр шав кăлармасăр кăтартмелле пулнă. Шкул çурчĕ таврă ӳсекен çӳллĕ йывăçсем патне Семенковпа Журавлев хыçăмпа шуса çитсе пытаннă.

Часовойсем засадăсем патне çывхарсан, разведчиксем вĕсен пуçĕсене çапса çĕмĕрнĕ. Çакăн хыççăн Семенков алăкне хывнă та шкул çуртне çавран кĕрсе кайнă. Пысăк пӳлĕмре ӳсĕр офицерсем çывăрнă. Сĕтел çинче арех кĕленчисем ларнă. Гитлеровецсем çывăрнă пулнă. Улттăшне вĕсенчен кровачĕсем çинчех вĕлернĕ, пĕрне тыткăна илнĕ. Штаб документĕсене пуçтарса илнĕ.

Пур проводсене те татса, гвардеецсен отрячĕ пĕрре пемесĕрех вăрманалла кайнă.

Çул урлă каçса йывăçсем хушшине пытанма ĕлкĕрсенех, гвардеецсем ял патнелле çывхаракан танксен шавне илтнĕ. Икĕ разведчика яла янă. Вĕсенчен пĕри часах каялла таврăннă та ял хĕрринче 30 танк тата икĕ çăмăл машина тăрăнни çинчен командира пĕлтернĕ. Гвардеецсем, тыткăна лекнине хураллама икĕ çын хăварса, каллех яла таврăннă. Пирĕн наблюдатель тăшман танкисчĕсем кĕнĕ çуртсене кăтартнă. Çав çуртсене хăвăрт çавăрса илсе, разведчиксем нимĕçсем çине гранатăсем ывăтнă.

Тепĕр кунне гвардеецсен отрячĕ фронт линийĕ урлă каçса хăйсен чаçне çитнĕ.

АЧАСЕНЕ — ÇУЛЛАХИ ЛАГЕРЬСЕМПЕ КУРОРТСЕНЕ

АЛМА-АТА, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Казахстанри санаторисенче тата лагерьсемпе курортсенче çак çулла 78.000 ача канмалла. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, вăл 7 хут ытларах пулать.

* * *

БАРНАУЛ, июнĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Алтайри хăшпĕр курортсенче фронтовиксен ачисене тата ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă эвакуациленĕ ачасене сывалмалла тунă. Ту çинчи Чемал ятлă станцире (климат станцийĕнче) Ленинград ачисем сывалса тӳрленессĕ. Унта Ленинградран куçса килнĕ туберкулезлă ачасен санаторийĕ вырнаçнă. «Белокуриха» ятлă курортра пионерсен санаторилле лагерĕ «Артек» вырнаçнă. Канса сывалма тивĕçлĕ ачасен малтанхи ушкăнĕсем кунти курортсене çитнĕ те ĕнтĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 15-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 4 артиллери батарейине тата минометсен 3 батарейине пусарса ларнă, темиçе чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ, тăшман пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 4 артиллери батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарнă. Пĕр участокра пирĕн разведка тăвакан отряд тăшман позицийĕсене атакăланă та штык вĕççĕн пынă çапăçура 40 гитлеровеца вĕлернĕ. Разведчиксем 2 дзота сирпĕнтерсе янă, тăшмантан гранатомет, пулемет тата темиçе автомат тытса илнĕ, унтан ăнăçлăнах хăйсен чаçне таврăннă.

Пирĕн зенитлă артиллери персе сиенленĕ нимĕç самолечĕ пирĕн войскăсем тăракан вырăна ӳксе анса ларнă. Самолет экипажне тыткăна илнĕ.

* * *

Мценскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пĕр чаçăн боецĕсем нимĕç пехотин 4 контратакине сирсе янă. Пĕр хутĕнче тăшман, тĕтĕм чаршавĕ хыçĕнче пытанса пырса, халăх пурăнакан пĕр пунктăн хĕррине, çак кунсенче пирĕн подразделенисем йышăнса илнĕскерĕн хĕррине, кĕрсе кайнă пулнă. Пирĕн боецсем, хирĕç пырса çапса, гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Каçалапа нимĕçсем халран кайнă та атакăлама пăрахнă. Кунĕçа тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра тăшман пехотин пĕр роти пирĕн пĕр чаçăн боевой хуралне атакăлама хăтланнă. Пирĕн боецсем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе 60 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

Пирĕн летчиксем тăшманăн тылĕсене тапăннă, чугунçул станцийĕсене, эшелонсене тата нимĕç склачĕсене пыра-пыра çапнă. Бомбăсем пăрахнă районсенче вăйлă пушарсем тухнă. Темиçе тĕлте вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем нимĕçсен оборона сооруженийĕсем çине темиçе хутчен вăйлăн пере-пере илнĕ. Пирĕн артиллери 3 орудие, минометсен батарейине, 7 пулемет пĕтерсе тăкнă, 3 дзота, 6 блиндажа тата 3 наблюдательнăй пункта ишĕлтернĕ, тăшман пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севск районĕнче пĕр чаçăн артиллерисчĕсем артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă тата тăшман обозне аркатнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллери тăшманăн 2 дзотне çĕмĕрнĕ, ултă кĕпçеллĕ минометне пĕтерсе тăкнă тата 80 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

* * *

Брест облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ чугунçул çине минăсем хурса тухнă. Нимĕçсен çав çулпа пынă çар поезчĕ минăсем çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайнă. Пĕр паровоз, салтаксемпе офицерсем ларса пынă 14 вагон тата автомашинăсем тиенĕ 2 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Брестпа Минск хушшинчи чугунçул çинче Киров ячĕпе тăракан отрядри партизансем автомашинăсем турттарса пыракан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровозпа платформăсем çĕмĕрĕлнĕ, автомашинисем юрăхсăра тухнă. Май уйăхĕн вĕçĕнче Брест облаçĕнчи Котовский ячĕпе тăракан отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ фашистла помещик имениине сасартăк вăркăнса кĕнĕ те, имени хуралне вĕлерсе пĕтерсе, помещик çуртне тата ытти хуралтисене çунтарса янă. Партизансем çав именире 250 ĕне тытса илнĕ, вĕсене вара халăха валеçсе панă.

* * *

Нимĕçсен 12-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Франц Н. çапла каласа панă: «Нимĕçсен çар тĕрмисемпе штрафной лагерĕсенчен нумай çуллăха лартмалла тунă çынсен ушкăнĕсене кашни кунах срокчен кăларассĕ те фронта штрафной батальонсене ярассĕ. Вĕсен вырăнне айăпа кĕнĕ ытти салтаксем пырассĕ. Эпĕ Эльба хĕрринчи Торгау тĕрминче темиçе уйăх лартăм. Унăн подвалти хутĕнчи питĕ тăвăр камерисенче тимĕр тăлăсемпе тăлланă салтаксем, çапăçма килĕшменскерсем лараççĕ. Вĕлермелле тунисене крепость стенисем хыçĕнче персе вĕлереççĕ. Эпĕ тĕрмере пурăннă вăхăтра 38 çынна персе вĕлерчĕç».

* * *

Лансра тата ун таврашĕнче француссен ирĕклĕ стрелокĕсем засадăсенчен персе, 8 нимĕç офицерĕпе унтер-офицерне вĕлернĕ. Иссире патриотсем нимĕçсен çар гаражне çунтарса янă. Реймс çывăхĕнче ирĕклĕ стрелоксем нимĕçсен автоколоннине тапăннă та темиçе вуншар грузовой автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Лаура департаментĕнче патриотсем нимĕç оккупанчĕсен [illegible] çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

Июнĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 16-мĕшĕнче фронтра палла улшăнусемех пулман.

Пирĕн авиаци Хура тинĕсре нимĕçсен подводнăй лодкине путарнă. Баренц тинĕсĕнче тăшманăн танкерне тата транспортне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем 400 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери 8 орудие, минометсен батарейине, 5 пулемет тата пĕр огнемет пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра пирĕн пĕр чаçăн разведка тăвакан отрячĕ тăшман траншейисене кĕрсе кайнă та 70 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Унтан, темиçе çынна тыткăна илсе, хăйсен чаçне таврăннă.

Сывлăшри çапăçура пирĕн летчиксем 3 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Жиздры районĕнче тăшманăн пĕр батальон таран пехоти çапăçса разведка тума хăтланнă. Малтан гитлеровецсем пирĕн боевой хурала хĕссе, пирĕн малти траншейăсене кĕрсе кайнă. Унтан пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсене хирĕç пырса çапнă та вĕсене траншейăсенчен хăваласа кăларнă. Çапла вара хăйсен позицийĕсене пĕтĕмĕшпех каялла тытса илнĕ. Çав çапăçура тăшманăн 160 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Мценскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман, хăй çухатнă халăх пурăнакан пунктсене каялла тытса илес тесе, ирхине çĕнĕрен атакăсем пуçласа янă. Тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсем каланă тăрăх, вĕсене хăйсен çухатнă позицийĕсене кирек мĕн пулсан та каялла тытса илме хушнă пулнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен хаяр атакисене кун каçиччен сирсе тăнă, хăйсем йышăннă позицисене хăйсен аллинче çирĕп тытса тăнă. Тăшманăн 3 батальонне çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳстернĕ. Пирĕн полевой тата зенитлă артиллери нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă тата 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Севск районĕнче пирĕн артиллери тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисене тата обозĕсене пенĕ. Пĕр участокра гитлеровецсен 2 взводне вĕлерсе пĕтернĕ, пĕр орудине, 5 пулемет точкине тата грузсем тиенĕ автомашинисемпе лавĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белгород районĕнче пирĕн разведка тăвакан группăсемпе снайперсем 100 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Пирĕн артиллери 2 орудие, 4 пулемет пĕтерсе тăкнă, 2 дзота ишĕлтернĕ, тăшман пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксемпе зенитлă артиллери нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем 120 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Артиллери 12 дзота ишĕлтерсе антарнă, артиллерипе минометсен 7 батарейине тата тăшманăн 11 уйрăм орудине пусарса ларнă. Снайпер Столяров юлташ пĕр кун хушшинче 4 гитлеровеца вĕлернĕ, снайпер Сухов юлташ 3 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Украинăри районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктри нимĕç гарнизонне сасартăк тапăннă. Партизансем 60 гитлеровец таран вĕлернĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ. Çав çапăçура Семен партизан 3 нимĕçе вĕлернĕ, Антонпа Сидор партизансем 5-шер гитлеровеца вĕлернĕ. Боеприпассемпе çар тумлăхĕн складне сирпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизан-подрывниксен ушкăнĕ нимĕçсен 2 чугунçул эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 2 паровоз, 14 вагон тата çар грузĕсем тиенĕ 9 платформа çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Нимĕçсен 21-мĕш авиапехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Вальт З. çапла каласа панă: «Германире лару-тăру питĕ начарланнă. Нимĕç войскисем Хĕвелтухăç фронтĕнче тата Çурçĕр Африкăра поражени сем тӳснине пула нумай нимĕçсем Германия çĕнтерессине ĕненми пулчĕç. Нимĕç хаçачĕсем Германи оккупациленĕ çĕршывсенче тунă укреплениĕсене питĕ мухтаççĕ. Анчах та çав сăмахсене никам та ĕненмест, пурте малашнехи событисене хăраса кĕтсе тăраççĕ. Англипе Америка авиацийĕ Германи хулисене час-часах тапăннине пула халăх çак вăрçă пирки тарăхма пуçланă. Эссенра тăшман самолечĕсем тапăннă хыççăн халăх хумханнă. Çынсен пысăк ушкăнĕ ĕç бюровĕн çуртне аркатнă. Мĕнпур списоксене, карточкăсене, документсене пĕтерсе тăкнă. Çапла вара темиçе пин çынна çар промышленноçĕнче ĕçлеме мобилизацилес ĕçе чарса лартнă. Апрельпе май уйăхĕсенче гестапо Берлинра, Эссенра тата ытти хуласенче те çынсене йышлăн арестленĕ».

* * *

Парнас районĕнче (Греция) грек партизанĕсем итальянецсен пысăк вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă. Оккупантсене çĕмĕрсе тăкса каялла тартнă. Итальянецсен 580 салтакĕ хăйсен мĕнпур хĕçпăшалĕсемпех партизансене тыткăна парăннă. Крит утравĕ çинче Греци патриочĕсем фашистсен 3 [illegible]

Малта пыракан ферма

ЕТӖРНЕ. Кӑларни «Пионер» колхозӗн сӗт-ҫу ферми районра малта пыракан фермисенчен пӗри шутланать. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ферма ҫулталӑк хушшинче тултарать, выльӑхсен йышӗ ӳссе пырать. Фермӑра 135 пуҫ мӑйракаллӑ шултра выльӑх пур, вӗсенчен 23 пуҫӗ ӑратлӑ ӗнесем, 13 пуҫне государствӑна ӑратлӑ выльӑх ҫине сунӑ.

1942 ҫулта ферма плана тӑрӑх кашни ӗнерен 1.500 литр сӗт суса илмелле, 6.550 литр выхӑрмалла, 8.500 литр сӗт суса илнӗ. Кӑҫал фермӑра ӗҫлекенсем кашни ӗнерен 1.750 литр сӗт суса илме обязательство илнӗ. Фермӑн кӑҫалхи 5 уйӑх (январь—май) хушшинчи ӗҫӗ кӑтартнӑ тӑрӑх, обязательство пурнӑҫланса пырать. Ҫав 5 уйӑх хушшинче плана 19.645 литр сӗт суса илмелле пулнӑ пулсан, ферма 35.286 литр сӗт суса илнӗ. Ҫапла вара плана пӗтӗмпех 5.631 литр ытла тултарнӑ.

Фермӑн чи лайӑх доярки, [illegible] депутачӗ Анисия Иванова ҫак 5 уйӑх хушшинче плана кӑтартнӑ 6.550 литр вырӑнне 8.500 литр сӗт суса илнӗ. Ҫамрӑкраххисем фермӑра ытти дояркӑсене те паха тӗслӗхпе ҫавӑтса ӗҫлеҫҫӗ. М. Иванова доярка 5 уйӑх хушшинче плана кӑтартнинчен ирттерсе 2.450 литр, М. Васильева 1.783 литр суса илнӗ. Халӗ фермӑра доярка сем сӗт сумалли суталӑкри плана сентябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарассипе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӑвӗн пекех кунта фермӑра ҫамрӑк пӑрусене пӑхса ҫитӗнтересе те пысӑк пахалӑх ... Пӑрусем валли ... Кӑҫалхи пӑрусене Анна Родионова пӑхать. Вӑл пӑхакан пӑрусем кашни талӑкра 450—600 грамм хушӑнаҫҫӗ. Ку вӑл А. Родионова пӑрусене лайӑх пӑхнипе ҫитӗннипе килет.

1943 ҫулта выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана ферма мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 105 процент, сыснасем енӗпе 176 процент, сурӑхсем енӗпе 118 процент тултарнӑ.

Фермӑра выльӑхсен хисепӗ тата ӳсет. Тулӑхлӑх ӳсся пынӑ май, ферма тупӑшӗ те ҫултан ҫул ӳссе пырать.

1939 ҫулта ферма колхоза пӗтӗмпе те 24 пин тенкӗ ҫеҫ тупӑш илсе панӑ пулсан, 1942 ҫулта вӑл 78 пин тенкӗ тупӑш илсе панӑ. Фермӑра ӗҫлекенсем кӑҫал 100 пин тенкӗрен кая мар тупӑш пама тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Фермӑра ӗҫе тӗрӗс организациленӗ. А. Иванова доярка фермӑра 1935 ҫултанпа ушкӑнпа ӗҫлет. Ҫак ҫулсем хушшинче вӑл пӗтӗмпе 12.300 литр сӗт суса илнӗ. Лайӑх ӗҫленӗшӗн колхоз правленийӗ М. Иванова дояркӑна та ... пама пӗрре мар премисем панӑ. Ҫав-лам ҫул фермӑра ӗҫ ушкӑнӗ тултарса ... Вӗсем ӗҫ тупӑшӗ ӗҫлекен сулсерен 600—700-шар литр сӗт ытла суса илсе пырать.

Ферма заведующийӗ отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗ П. Степанов юлташ хӑйӗн ӗҫне лайӑх пӗлет. Вӑл фермӑра ӗҫе тӗрӗс йӗркелесе ярас тесе хӑйӗн пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлет. Кашни ӗнене ирттерсе сусе ирттерсе тупмалла доярка валли ҫитерӗш ... Зоотехника пӗлӗвне ... ӗҫлекенсене ... Фермӑра ӗҫлекенсем зоотехника кружокӗ ... Ҫав кружока заведующийӗ Степанов юлташ хӑй ертсе пырать.

1943 ҫулта государствӑна сӗт-ҫу паракан плана ферма апрель уйӑхӗнче тултарнӑ. Государствӑна аш-какай памалли плана та ферма 100 процентпех тултарнӑ.

Фермӑра ӗҫлекенсем Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас ӗҫре те сахал мар ӗҫсем тӑвӑҫҫӗ. Кӑҫал А. Ивановӑпа М. Иванова оборона фондне 6-шар пин тенкӗ, 100-шар литр сӗт панӑ. М. Васильевӑпа А. Родионова 5-шар пин тенкӗ, ҫавӑн пекех тата Государствӑн Иккӗмӗш Военнӑй Заемне 3.000-шар тенкӗлӗх ҫырӑнса илнӗ.

Фермӑра ӗҫлекенсем хушшинче социалистла ӑмӑрту анлӑн сарӑлса пырать. Зоотехника кӑтартӑвӗсене тӗрӗс пурнӑҫласа пырса, Ҫаксем тултарса фермӑра сӗт ҫу ҫине ҫӗнӗ ӳсӗмсене тӑвас тесе ӗҫлеҫҫӗ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Тасалӑхшӑн ҫине тӑрса кӗрешмелле

Сулхаҫ вӗри вӑхӑтсем пуҫланчӗҫ. Ҫак вӑхӑтра пурӑнмалли ҫуртсене, килхушшисене, магазинсене, апат-ҫимӗҫ устраивкисене склатсене бадасене уйрӑмӑнах таса тытмалла. Ҫак вырӑнсенче вӑхӑтра тасатса тӑмасан тӗрлӗ инфекцисем вырӑнланса чирсене ҫынсем хушшине сарӑласси пулать.

Пӗр-пӗр заводӑн килхушши е пурӑнмалли ҫурт таса мар пулсан, унта коменданчӗ айӑплӑ. Пӗр-пӗр столовӑй апат-ҫимӗҫ усрамалли, вӗсене хатӗрлемелли вырӑнсене пӑхмалла пулсан, ку вара унӑн директорӗ айӑплӑ. Вӑл ҫакӑн пирки айӑпласси ӗҫсемпе санитари тӗпӑштӗмленипе пӗлтерет.

Кӑҫалхи ҫул урамсене, суртӑрсене масса тасатуси ирттернӗ ... уҫӑ тасатуси ирттерме палӑртнӑ... Канаш хулине тасатассине февраль уйӑхӗнче пуҫланӑ. Ҫак хула мартӑн вӗҫӗнче, апрель уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче тасатнӑ. Ҫак хулана июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне 75 процент ҫеҫ тасатнӑ. Май уйӑхӗнче вара ҫак хула тасатнӑ процент тасатнӑ. Хула, совет органӗсем ... Ҫак хулана тасатассине те ... хулана пулнӑ вӑхӑтра улпулнӑ. Май уйӑхӗнче вӗсене урӑх ӗҫе куҫарнӑ пирки хулана тасатасси тасамарланӗ, ҫурттасатасси пӗтӗмпех чарӑнса ларнӑ. Тасалӑх енӗпе Шупашкар хули те чылай вырӑнта тӑрать. Хулана апрелӗн 26-мӗшӗнче майӑн 10-мӗшӗ хушшинче масӑллӑн тасатма палӑртнӑ пулсан та тасалӑх ытла ... Ҫав вӑхӑтра вӑл урамсене, площаде, пасар вырӑнне тата 1.500 ҫуртйӗр таврашӗнчи тасамарлӑха пӗтӗмпех тасатрӗҫ. Анчах ҫав вӑхӑтра ӗҫе пӗтӗмпех туса пӗтерейменпулсан та май уйӑхӗнче вӑл ӗҫ пӗтӗмпех чарӑнса ларчӗ. Ҫак ӗҫе коммунальнӑй хуҫалӑх пайӗ вӗҫне ҫитерме

шутламарӗ. Ку ҫеҫ те мар, халӗччен тасамарлӑхпа турттарса тӑкма ... лаша пулнӑ пулсан, хӑйӗ вӗсемпе те урӑх ӗҫре усӑ курасшӑн. Ҫавна пула ... таса мар ... пӑтратрӗҫ.

Хальхи вӑхӑтра хулана тасалӑх хӑтӗрлеме иккӗмӗш ӗҫ тӑвакан ... урамсене, тротуарсене ... вырӑнсене ... ҫӳп-ҫап, урамсене кӗреҫесене ... хуҫасене тасатма ... вырӑнсене пӳрт ...

Республикӑра ӗҫ ... тасатасси ... Унта хулана 1-мӗшӗ тӗлне мӗнпур учреждени ... ҫуртсем 50 процентне кӑна тасатнӑ. Нумай организацисем ... пӗтӗм урамне тасатман ... Кӑшт ... Хулара ... сорт тасатман ... урамсене ... тасатса тӑмаҫҫӗ ...

Тасалӑх енӗпе республикӑра Элӗк районӗ малта пырать. Капшрин ... урамсене, килхушшисене ... тасатнӑ. Район центрӗнче тасалӑх кӳрес пирки 22 воскресник туса иртернӗ. Ҫавӑн пекех Хӗрлӗ Чутай, Советски, Шупашкар, Тӑвай районӗсенчи ялсем те тасалӑх енӗпе начар мар вырӑнта тӑраҫҫӗ.

Е. КРАСНИЦКАЯ,

Чӑваш АССР-ӗнчи главнӑй госсанинспектор.

Укерчӗк ҫинче: Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи чи лайӑх стахановецсем — Гутник юлташпа (сулахайра) В. А. Николаев юлташ бригадир Гутник юлташ куллен нормӑна 250—300 процент тултарса пырать, Николаев юлташ нормӑна 302 процент тултарса пырать.

Р. РОИЗЕН фотоӳкерчӗкӗ.

Туна ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармаҫҫӗ

Ширшов ячӗпе тӑракан артель иртнӗ ҫулта начар результатсем кӑтартнӑ. Кӑҫал та январьпе февраль уйӑхӗсенчи плана тултараймарӗ. Ҫакӑ вӑл артельте ҫирӗп руководство пулманнинчен килнӗ.

Январӗн юлашки кунӗсенче артеле ертсе пыма ҫӗнӗ ҫынна — эвакуаци йӗркипе куҫса килнӗ Анна Алексеевна Бажановӑна лартнӑ. Вӑл часах ӗҫе урӑх майлӑ тума тытӑннӑ. Малтанхи кунсенчех вӑл рабочисем хушшинче ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетме, ӗҫлекенсене тухӑҫлӑн ӗҫлемешкӗн пур кирлӗ майсем те туса пама тӑрӑшнӑ. Ҫӗвӗ ҫӗлекен цеха пысӑклатнӑ, икӗ пӳлӗм тунӑ, вӗсене лайӑх тасатса илемлетнӗ, ҫутӑ парассине лайӑхлатнӑ тата икӗ сменӑпа ӗҫлеме пуҫланӑ.

Агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе те лайӑхланӑ. Цехсенче агитаторсемпе беседчиксем куллен калаҫусем ирттернӗ, рабочисене ҫӗршывра пулса иртекен ӗҫсемпе, ҫавӑнпа пӗрлех артель коллективӗн, уйрӑм рабочисен ӗҫӗсемпе паллаштарнӑ. Кунсӑр пуҫне тата артельте кӑтарту хаҫачӗ организациленӗ, стена хаҫачӗ те йӗркеллӗн тухма пуҫланӑ. Правлени, кашни уйӑхра тенӗ пекех, малта пыракан стахановецсене премисем парса пынӑ.

Ҫаксем артель ӗҫне лайӑхлатма чылай пулӑшнӑ. Коллектив март уйӑхӗнчи плана 118,8 процент, апрель уйӑхӗнчине 129,6 процент, май уйӑхӗнчине 161,7 процент тултарнӑ. Ҫак кунсенче артель коллективӗ пӗрремӗш сур ҫулти плана та ӑнӑҫлӑн тултарчӗ.

Артельте ӑмӑрту анлӑн сарӑлса кайнӑ. Кашни рабочипе работница, тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе, тата ытларах ҫитӗнӳ тӑвассишӗн кӗрешет. Халӗ артельте нормӑна тултарса пырайманнисем ҫукпа пӗрех, ҫав вӑхӑтрах двухсотниксен хисепӗ 26 процент ытла шутланать. Стахановка Надя Вахлачева халь никӑш кун та нормӑна 300 процентран кая тултармасть. Март уйӑхӗнче вӑл, вӑтамран илсен, кашни кунах виҫӗ ҫын тумалли ӗҫсене туса пынӑ. Леонтьева, Пульхеровская, Пичугина, Логунова тата ытти юлташсем те, вӑхӑта шӑхмасӑр ӗҫлесе, нормӑсене 2—3 хут ирттерсе пыраҫҫӗ.

— Ҫӗршыв валли тискер кунӗсене чӑтса ирттернӗ вӑхӑтра эпир хамӑрӑн мӗнпур вӑй-хала, пултарулӑха паттӑр Хӗрлӗ Ҫара пулӑшнӑ ҫӗре пама кӑтӗр, — теҫҫӗ артельте ӗҫлекенсем.

Тӗрӗс тӑваҫҫӗ. Мӗнпур вӑй-хала халь вӗсем ҫӗршыв оборонине тӗреклетнӗ ҫӗре параҫҫӗ. Ҫакна вӗсем ӗҫре кӑна мар, халь анчах ҫӗршывра пулса иртнӗ заем кампани вӑхӑтӗнче те уҫҫӑн кӑтартса пачӗҫ. Кунта пӗр рабочипе работница та ҫӗнӗ заема пӗр уйӑхри ӗҫукҫинчен кая ҫырӑнман. Стахановка Вахлачева юлташ, акӑ, уйӑхне 500 тенкӗ ӗҫлесе илекенскер, Государствӑн Иккӗмӗш Военнӑй Заемне 2.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине те ҫуррине парса татрӗ.

Унӑн примерӗ тӑрӑх Логунова юлташ та виҫӗ уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ ҫырӑнчӗ. П. Миронова, Лапинина, Смирнова, Чувашова, Леонтьева, Нечерских, Лызкова юлташсем иккшер уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ, Короткова, Федосеева тата ытти стахановкӑсем 1,5 уйӑхри ӗҫукҫи чухлӗ ҫырӑнса, ҫуррине ҫийӗнчех парса татрӗҫ.

Ширшов ячӗпе тӑракан артель коллективӗ юлашки вӑхӑтра районра малта пыракан коллективсенчен пӗри шутланать. Ҫак хисеплӗ ята малашне те чыслӑн тытса тӑрас тесе, рабочисемпе работницӑсем халь ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Кирек мӗнле заказ парсан та, артель коллективӗ ӑна пысӑк пахалӑхпа тата срокчен пурнӑҫлама тӑрӑшать.

Х. ЛИСИН.

Чӑрмавсене хӑвӑрт пӗтермелле

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Сӗт-ҫу завочӗн коллективӗ май уйӑхӗнчи производство планне 150 процент тултарнӑ. Июнь уйӑхӗнче тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме обязательство илнӗ. Паянхи куна сӗт-ҫу завочӗ ҫур ҫулхи плана 60 процент таран пурнӑҫланӑ. Июнӗн 9-мӗшӗ тӗлне завода 33.472 литр сӗт пырса кӗнӗ. Ҫакӑнта ӗҫлекенсем И. Орлова, Л. Ефимова, Воблова тата ыттисем те, ирхине 4 сехетрен пуҫласа каҫпа 10 сехетчен ӗҫлесе, сӗтрен 1.752 килограмм ҫу туса хатӗрленӗ. Вӗсем заводра кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ.

Сӗт-ҫу заводӗнче ҫӑва хума чансемпе пичкесем ҫитмеҫҫӗ. Ҫавна пула кунта хӑш чухне ӗҫ чарӑнса тӑрать. Завод директорӗн Лукин юлташӑн ҫак ыйтӑва халех татса памалла. Сезон вӑхӑтӗнче завода пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлеттермелле. Чӑваш Маслопром трестӗн ку ӗҫре пулӑшу памалла.

С. ШАДИН.

(Хамӑр корр.).

Художествӑллӑ произведенисем вулаҫҫӗ

Ҫӗрпӳ районӗнчи Патӑръелӗнчи тулли мар вӑтам шкулта вӗренекенсем хушшинче художествӑллӑ произведенисене вулама юратакансем питӗ нумай. Программӑна кӗрекен произведенисемсӗр пуҫне темиҫе кӗнеке вуласа тухнӑ ачасем темӗн чухлех.

Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче 6-мӗш «Б» класра вӗреннӗ Михайлов Александр пирӗ ҫапла каларӗ: «Кӑҫал эпӗ илемлӗ литературӑпа нумай кӗнеке вуласа тухрӑм. Вуланӑ чухне яланах васкамасӑр, ӑнланса вулама тӑрӑшатӑп. Вӗренӳ тӗрӗслевӗсем пуҫланас умӗн эпӗ, акӑ Лермонтов, Пушкин, Николай Островскин паллӑрах произведенийӗсене тепӗр хут вуласа тухрӑм. Ку мана тӗрӗслӳре вырӑс литературипе «хорошо» паллӑ илме пулӑшрӗ», терӗ.

И. М.

Ют ҫӗршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙӖН ӖҪӖСЕМ

ЛОНДОН, июнӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: июнӗн 15-мӗшӗ ыран тенӗ тух ҫӗрле акӑлчансен йывӑр бомбардировщикӗсем Рурӑн хӗвеланӑҫ пайӗнчи объектсене тапӑннӑ, ҫав шутра, Оберхаузена тапӑннӑ. Вӑйлӑ пушарсем тухнӑ. Ҫак операцисенчен 18 бомбардировщик каялла таврӑнман. Ҫурҫӗр Францине Голланди ҫинче сӑнаса вӗҫсе ҫӳренӗ тух чугунҫул объекчӗсене атакӑланӑ.

Июнӗн 14-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле ҫыранри авиацин самолечӗсем Голланди ҫыранӗсем патӗнче тӑшман суднисен караванне атакӑланӑ. Пӗр пысӑк грузовой судно ҫинче вӑйлӑ взрыв пулни палӑрнӑ, тепӗр пӗчӗкрех тоннажлӑ парохода путарнӑ. Каравана хӳтӗлесе пыракан тӑшман карапӗсенчен сахалтан та тӑваттӑшне сиенленӗ.

Авиаразведкӑн даннӑйӗсем тӑрӑх, Англи авиацийӗ июнӗн 13-мӗшӗнче Бремена тапӑннӑ чухне унти суднӑсем тӑвакан верфьсене вӑйлӑн сиенленӗ.

Вӑтаҫӗр тинӗс бассейнӗнче союзниксен сывлӑш-ҫар вӑйӗсем тӑшманӑн Сицилири объекчӗсене вӑйлӑн пыра-пыра ҫапнӑ. Мессина порчӗн районӗнче пушарсем нумай тухнӑ тата взрывсем нумай пулнӑ.

ЛОНДОН, июнӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтереҫҫӗ: июнӗн 15-мӗшӗнче ирхине Англи авиацийӗ Шербурски ҫурутрав сывӑхӗнче тӑшман суднисене, ҫавӑн пекех тата Дьепп патӗнчи чугунҫул объекчӗсене атакӑланӑ.

Эгей тинӗсӗнче Англи истребителӗсем июнӗн 15-мӗшӗнче тӑшман суднисене атакӑланӑ.

Союзниксен сывлӑш-ҫар вӑйӗсем июнӗн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле тата июнӗн 15-мӗшӗнче кӑнтӑрла Сицили утравне тапӑннӑ чух Бокка-ди-Фалько Кастельветрано, Комизо, Шакка тата Борицццо аэродромӗсем ҫине, ҫавӑн пекех тата Марсалри объектсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Кастельветрано, Бакка-ди-Фалько тата Камизо аэродромӗсенче пушарсем тухнӑ.

Июнӗн 16-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем Сицили утравӗ ҫинчи тата Италин кӑнтӑр ҫыранӗсенчи чугунҫулсемпе шоссесем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ, тупӑсемпе пенӗ.

ИТАЛИН КӐНТӐР РАЙОНӖСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ВАСКАСА ВЫРАҪҪӖ

СТОКГОЛЬМ, июнӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Скандинавин телеграф бюровӗ Римран ҫапла пӗлтерет: Италири влаҫсем Италире, пуринчен ытла унӑн кӑнтӑр районӗсенче, тырпулсене пиҫӗ васкаса вырса кӗртмешкӗн мерӑсем йышӑннӑ. Кӑнтӑрти районсене пулӑшма ӗҫ вӑйӗ ытти районсенчен нумай янӑ. Вырӑнти влаҫсене, вӑрҫӑ валли ытла кирлӗ мар предприятисене хупса лартса, унти рабочисене тырпул пуҫтарса кӗртмешкӗн районсене яма ирӗк панӑ.

АНГЛИ КОРОЛӖ ҪУРҪӖР АФРИКАНА ПЫНӐ

ЛОНДОН, июнӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи королӗ ҫар министрӗпе Григга тата авиаци министрӗпе Синклерпа пӗрле Англин Ҫурҫӗр Африкӑри 1-мӗшпе 8-мӗш армийӗсене, тинӗс ҫар флотне тата сывлӑш-ҫар вӑйӗсене пырса курнӑ. Ҫавӑн пекех вӑл Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ҫӗр ҫинчи ҫарӗсемпе тата сывлӑш ҫар вӑйӗсемпе, унтан тата французсен ҫарӗпе паллашнӑ. Король союзниксен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен главнокомандующине Эйзенхауэр генерала Бани орденӗн рыцарь хӗресне панӑ.

ФРАНЦУЗ НАЦИНЕ ИРӖКЕ КӐЛАРАС ТӖЛӖШПЕ ӖҪЛЕКЕН КОМИТЕТ ФРАНЦИ ХАЛӐХНЕ ЧӖНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июнӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Алжиртан ҫапла пӗлтерет: француз нацине ирӗке кӑларакан комитет Францире тата Франци владенийӗсенче пурӑнакан мӗнпур французсене чӗнсе каланине пичетлесе кӑларнӑ. Унта вӑл пур французсене те июнӗн 18-мӗшӗнче «вырӑнти лару-тӑрури туса тӑракан условисене кура» пӗр ҫӗре пухӑнса, француз халӑхне ирӗке кӑларас тӗлӗшпе пыракан движени 3 ҫул тултарнине паллӑ тума чӗнет. Чӗнӳре ҫакна кӑтартса панӑ: тӗп Францире ҫав демонстрацисем мӗнле майсемпе пулса иртмеллине оккупантсене хирӗҫ тӑракан ушкӑнсем кӑтартса пама тивӗҫлӗ. Францине ирӗке кӑларнӑ территорийӗсенче ҫав демонстрацисене туса ирттерме кирлӗ мероприятисене влаҫсемпе пӗрле патриотла организацисем йӗркелесе хатӗрлеҫҫӗ. Пухусенче «Марсельеза» юрласа пӗтернӗ хыҫҫӑн пӗр минута хушши шӑп пулса, ҫак кӗрешӳре Франциш ӗн вилнисене чысламалла.

БРЮССЕЛЬРЕ ГИТЛЕРЛА ПРОПАГАНДА ХӐТЛАНӐВӖ ПУТЛАНСА ЛАРНИ

ЛОНДОН, июнӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Бельгин Лондонри учрежденийӗсенче каланӑ тӑрӑх Бельги халӑхне хӑратса хӑйсем майлӑ ҫавӑрас шутпа гитлеровецсем Брюсселе вырӑссен ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ темиҫе танкне илсе пынӑ та хула урамӗсенче кӑларса тӑратнӑ. Анчах та гитлеровецсен пропагандин хӑтланӑвне Брюссель хулинчи халӑх намӑса кӑларнӑ. Вӗсем совет танкӗсене чечексемпе тата хӗрлӗ лентӑсемпе илемлетсе лартнӑ.

США-н хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен хисепӗ ӳсни

НЬЮ-ЙОРК, июнӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, США-н хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен хисепӗ июнь уйӑхӗн вӗҫӗ тӗлне 9 миллион та 200 пин ҫынна ҫитмелле. Июлӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа декабрӗн 31-мӗшне ҫитиччен кашни уйӑхрах ҫарта 300 пиншер ҫын хутшӑнса пымалла.

Кӑҫалхи июль уйӑхӗ тӗлне промышленноҫра ӗҫлекен рабочисемпе хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен личнӑй составне шутласан, вӑрҫӑ ӗҫне 63 миллион ҫын (арҫынна хӗрарӑм) хутшӑнмалла. Юлашки вуникӗ уйӑх хушшинче США-н ҫар промышленноҫне 2 миллион та 300 пин ҫын ҫӗнӗрен хутшӑннӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех ҫарпа флота 5 миллион та 400 пин ҫын хутшӑннӑ.

США-н авиаци промышленноҫӗнчи рабочисен хисепӗ 1941 ҫулхи декабрьте 455 пин ҫын пулнӑ пулсан, кӑҫалхи март уйӑхӗ тӗлне 1 миллион та 800 пин ҫынна ҫитнӗ. Карапсем тӑвакан промышленноҫра рабочисен хисепӗ ҫав вӑхӑтрах 523 пинтен 1 миллион та 600 пине ҫитнӗ.

ВЕНГРИРИ ЛАРУ-ТӐРУ ҪИВӖЧЛЕННИ

ЛОНДОН, июнӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви ҫапла пӗлтерет: Венгрире шалти лару-тӑру питех те ҫивӗчленсе кайнӑ. Будапештра кашни кун тенӗ пекех халӑха хупӑрласа илсе тӗрӗслеҫҫӗ. Ҫак кунсенче хулара 800 ҫынна ытла арестленӗ. Пӗтӗм Венгри ҫӗршывӗпех уйрӑм ҫынсене телефонпа калаҫма чарса лартнӑ.

КӖСКЕН

▲ Совет Союзне ҫак вӑрҫӑра пулӑшу парса тӑракан американецсен комитечӗ нумаях пулмасть Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче вилнӗ паллӑ вырӑс композиторӗ Рахманинов ячӗпе уйрӑм фонд уҫнӑ. Ҫак вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫав фондри укҫа-тенкӗ Совет Союзне пулӑшу парса тӑнӑ ҫӗре каять, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра ҫав фондри укҫа-тенкӗ США-па СССР хушшинче культурӑллӑ ҫыхӑнусене ҫирӗплетес ӗҫе кайса тӑмалла.

▲ Июнӗн 22-мӗшӗнче Калифорнири верфьсенчен пӗринче «Марина Раскова» ятлӑ парохода туса пӗтерсе шыв ҫине антараҫҫӗ. Парохода советсен геройнине Марина Раскована хисеплесе ҫавӑн пек ят панӑ.

▲ Июнӗн 10-мӗшӗнче Лондонра К. Симонов ҫырнӑ «Вырӑс ҫыннисем» ятлӑ пьесӑна пӗрремӗш хут лартса кӑтартнӑ. Спектакль пит ӑнӑҫлӑн иртнӗ.

▲ Испанире юлашки темиҫе кун хушшинче американецсен 3 самолечӗ авари тӳснӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хусанти Н. Э. Бауман ячӗпе хисепленекен Государствӑн Ветеринари Институчӗ 1943—44 вӗренӳ ҫулне студентсене илесси ҫинчен пӗлтерет.

Вӗренесе 4 ҫул та 10 уйӑх вӗренмелле.

Вӗренме кӗрес текенсене вырӑс чӗлхипе, литературӑпа, физикӑпа тата химипе испытани тыттараҫҫӗ.

1942 ҫулпа 1943 ҫулта вӑтам шкултан (десятилеткӑран, рабфакран, техникумран т. ыт. те) отлично аттестатпа е «отлично» тата «хорошо» паллӑсемпе вӗренсе тухнисене Института испытанисемсӗрех йышӑнаҫҫӗ.

1942 тата 1943 ҫулсенче вӑтам шкул пӗтернӗ ытти ҫынсене те пушӑ вырӑнсем пур пулсан приемнӑй экзаменсемсӗрех илеҫҫӗ.

Заявленисене августӑн 25-мӗшӗччен илеҫҫӗ.

Урӑх вырӑнтан пынӑ студентсене общежити параҫҫӗ. Институтра столовӑй пур. Стипенди парас йӗрке тата вӗреннишӗн тӳлессинчен хӑтарасси ытти ҫӗрти пекех.

Института кӗресси ҫинчен ҫырнӑ заявленисене директор ячӗпе ҫакӑн пек документсемпе пӗрле тӑратмалла: тӗплӗн ҫырнӑ автобиографи, вӑтам шкул пӗтерни ҫинчен калакан аттестат, виҫӗ фотокарточка, ҫар обязанноҫӗ пирки справка тата Института пынӑ чухне паспорт илсе пымалла.

Адрес: Хусан хули, Б. Красная тата Красин урамӗсен кӗтесӗ, 58-мӗш ҫурт.

Шупашкарти энергетика техникумӗ ҫумӗнче июнь уйӑхӗнче техникума кӗме вӗренсе ҫитеймен ҫынсене техникума кӗмелӗх вӗрентме ятарласа уйрӑм курс уҫаҫҫӗ. Вӗрентессе укҫасӑрах вӗрентеҫҫӗ. Вӗренекенсене апат-ҫимӗҫ параҫҫӗ. Заявленипе пӗрле ҫак документсене тӑратмалла: 1) автобиографи тата 2) вӗреннине ӗнентерекен документ.

Заявленисене ҫак адреспа ямалла: Шупашкар хули, Калинин урамӗ, 23-мӗш номерлӗ ҫурт (3-мӗш номерлӗ шкул ҫурчӗ).

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Автотранспорт управленийӗн транспортпа экспедици контори грузсем ярса тӑракансене пурне те ҫакна пӗлтерет: ведомствӑсен автотранспорчӗ пушшӑн ан ҫӳретӗр тесе, контора Шупашкар—Канаш, Шупашкар—Етӗрне трактсем тӑрӑх грузсем яма йышӑнать.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: Шупашкар хули, Карл Маркс урамӗ, 67-мӗш номерлӗ ҫурт, Транспортпа экспедици контори. Тел. 3—04. Тата Канашри, Ҫӗрпӳри, Етӗрнери агентствӑсенче (авто-вокзалсенче) ыйтса пӗлме пулать.

Ялхуҫалӑх банкӗн Чӑваш контори бухгалтери работникӗсем вӗрентсе хатӗрлемешкӗн хӑй патне уйрӑм учениксене илет.

Адрес: Шупашкар хули, Карл Маркс урамӗ, Госбанк ҫурчӗ.

Пирӗн земляксем

Вӗсем тӑван ҫӗршыва хӳтӗленӗ

Тӑван ҫӗршыв! — ҫакӑнтан хаклӑ сӑмах урӑх ҫук та. Пире вӑл анне пек лӑпкаса ӳстернӗ, хӑйӗн икселми ырлӑхне панӑ, хӑйне хӳтӗлеме кашнинех вӑй-хал, ҫирӗплӗхпе хаярлӑх шилленӗ. Эпир унӑн кӑкӑрӗ ҫинче, хӑмӑш пек ӳсекен тырпула, илемлӗ шупӑрпа витӗннӗ йывӑҫсене, чӗркӗмӗл пек йӑлтӑртатакан кӳлӗсене, ҫаран-улӑхсене куратпӑр.

Юрататпӑр эпир тӑван ҫӗршыва! — теҫҫӗ пирӗн халӑхӑн ывӑл-хӗрӗсем. Юрататӑп эпӗ те ӑна! — тет отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗн вучӗ витӗр тухнӑ Иван Иванщиков.

Иванщиков юлташ халӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑ куна аса илет.

... Вӗсене оборонӑна йышӑнма приказ панӑ. Н-ски кавалери чаҫӗнчи боецсем малтанхи хут тӑшмана тӗл пулаҫҫӗ. Иванщиков тӑшмана сӑнама приказ илет. Пӗр кун иртрӗ — сӑнани нимех те параймарӗ. Иккӗмӗш кун... ҫӳлелле тусан ҫӗкленчӗ. Сасартӑк тӑшманӑн танкӗсем курӑнчӗҫ.

— Капитан юлташ! Тӑшман танкӗсем ҫывхараҫҫӗ, — пӗлтернӗ Иванщиков.

Танксем юханшыв хӗррине ҫывхарнӑ. Анчах унти кӗпере пирӗн боецсем сирпӗтсе янӑ. Снаряд тӑшманӑн чи малти танкӗсене пырса тиврӗ. Вутлӑ та хаяр ҫапӑҫу чылай пычӗ. Тӑшманӑн 62 танкӗ пӗтрӗ. Ҫакӑн чух Иванщиков та чылай танксене ӑшаларӗ.

Тӑшман шыв урлӑ каҫса, пӗр хулана тытса илме ӗмӗтленнӗ пулмӗш. Хулан пӗр пайӗ ҫунма... Танк хыҫҫӑн танк ҫӑлалла

куҫнӑ. Иванщиковсем хӗрӳллӗн ҫапӑҫнӑ — тӑшман енче вӑй ытларах пулин те, пӗлсе разведка туса, вӗсен подразделенийӗ ункӑран тухать. Ҫул ҫинче вӗсем нимӗҫсен автоматчикӗсене, мотоциклисчӗсене чылай пӗтерсе тӑкаҫҫӗ.

Малашнехи ҫапӑҫусенче пултарулӑх ӳссех пынӑ. Иванщиковсен чаҫӗ — гвардейски часть пулса тӑрать.

Пӗррехинче гвардеецсем тӑшманӑн оборона линине татса кӗрсе кайнӑ. Ҫав вӑхӑтра пирӗн эскадронсем окружение ҫапӑҫнӑ, вӗсем патне донесени ҫитермелле пулнӑ. Задание пурнӑҫлама янӑ боецсем таврӑнман. Ҫавӑн пирки полк командирӗ донесение ҫитерме Иванщикова хушать. Иванщиков часах боевой донесение ҫитерме тухса каять.

Май хӗвелӗ хӗрӳллӗн хӗртнӗ. Юханшыв урлӑ каҫса, ҫырма-ҫатра витӗр тухса, вӑл чаҫе хӑвӑрт ҫитет. Унти эскадронсем хамӑрӑн ытти чаҫсемпе пӗрлешеҫҫӗ. Ҫул ҫинче пулнӑ вӑхӑтра Иванщиков нимӗҫсен темиҫе салтакне пӗтерсе тӑкать.

Тепӗр ҫапӑҫура вӑл штабӑн кирлӗ документсене тӑшман ҫавӑрса илнӗ вырӑнтан пысӑк асталӑхпа илсе тухать.

Иванщиков юлташ вӑрҫӑра хӑюллӑ кавалерист пулса тӑрать. Советсен вӑхӑтлӑха тӑшман аллине лекнӗ чылай хулисене тӑшманран ирӗке кӑларнӑ ҫӗрте ҫапӑҫать. Вӑл — Сталинград патӗнчи хаяр ҫапӑҫусен участникӗ. Нумай ял-хуласене паттӑррӑн хӳтӗленӗ.

Хӗрӳ ҫапӑҫусем вӑхӑтӗнче Иванщиков коммунистсен партине кӗнӗ. Халӗ вӑл тӑван ялӗнче сывалса пурӑнать. Ун кӑкӑрӗ ҫинче — гварди значокӗ, «За боевые заслуги» медаль.

Гварди старши сержанчӗ Иван Николаевич Иванщиков тӑван ял-йышне фронтри ӗҫӗсем ҫинчен каласа парать.

...Пуҫламӑш шкул патӗнче эпӗ ҫамрӑк ачасене ҫар ӗҫне вӗрентнине куртӑм. Военрукӗ ачасенчен ытлашши пысӑках та мар, аллинче унӑн туя, паллах, вӑрҫӑ ҫулӗмӗ витӗр тухнӑ ҫын ӗнтӗ вӑл. Ачасем ӑна «Иван Михайлович» тесе чӗнеҫҫӗ.

Михайлов юлташ (ҫирӗм ҫулти ҫамрӑк) тӑшмана хирӗҫ кӗрешнӗ, фронтра снайпер-разведчик пулнӑ. Вӑл мино-

мет ӗҫне те аван пӗлет. Хӗрӳллӗ ҫапӑҫусенче, ҫавӑн пекех Ржев хулине ирӗке кӑларнӑ ҫӗрте пулса, вӑл тӑшманӑн салтакӗсене нумай пӗтернӗ. Командованин приказӗсене вӑхӑтра пурнӑҫланӑшӑн ӑна Ҫар Совечӗ «За боевые заслуги» медаль парса наградӑланӑ. Унӑн хӑюллӑ ӗҫӗсем ҫинчен дивизири хаҫат ҫине ҫырнӑ.

Иванщиковпа Михайлов — иккӗшӗ те Суткӳль ялӗнчен. Вӗсем тӑван ҫӗршыва хӳтӗленӗ.

Яков СИГАЙ.

Советски район.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, парти пурнӑҫ пайӗн—3—99 промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗн—5—31, издательство конторин — 0—23.

... № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. б. 53 84 п. в